25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮНЬ
2
ЮНКУН
114(6351) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, Чăваш АССР Наркомземĕпе Наркомземăн политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

112. **Канаш МТС-ĕнчи 1-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **Н. П. Павлов**). Вăл планпа палăртнă 184 гектар вырăнне 439 гектар сухаланă, 200 килограмм ытла горючи перекетлесе хăварнă.

113. **Канаш МТС-ĕнчи 6-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **П. Т. Тихонов**). Вăл планпа палăртнă 253 гектар вырăнне 439 гектар сухаланă, 100 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

114. **Канаш МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 8-мĕш тракторнăй бригади** (бригадирĕ **Н. М. Михайлова**). Вăл планпа палăртнă 138 гектар вырăнне 227 гектар сухаланă, 604 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

115. **Канаш МТС-ĕнчи 4-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **П. Львов**). Вăл планпа палăртнă 207 гектар вырăнне 331 гектар сухаланă, 470 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

116. **Канаш МТС-ĕнчи 3-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **Н. Данилов**). Вăл планпа палăртнă 184 гектар вырăнне 253 гектар сухаланă, 815 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

117. **Канаш МТС-ĕнчи 11-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **С. Каманин**). Вăл планпа палăртнă 207 гектар вырăнне 233 гектар сухаланă, 890 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

118. **Волкова** — Канаш МТС-ĕнчи трактористка. Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 34,5 гектар вырăнне 76 гектар сухаланă, 22 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

119. **П. Т. Тимофеев** — Канаш МТС-ĕнчи тракторист. Вăл урапаллă тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 34,5 гектар вырăнне 78 гектар сухаланă, 128 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

120. **Морозова** — Канаш МТС-ĕнчи трактористка. Вăл У-2 маркăллă тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 20 гектар вырăнне 39 гектар сухаланă, 100 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

121. **Н. Н. Николаев** — Канаш МТС-ĕнчи тракторист. Вăл У-2 маркăллă тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 20 гектар вырăнне 37 гектар сухаланă, 60 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

122. **И. Л. Сорокоумов** — Канаш МТС-ĕнчи тракторист. Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 34,5 гектар вырăнне 66 гектар сухаланă, 258 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

123. **О. Куракова**—Канаш МТС-ĕнчи трактористка. Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 34,5 гектар вырăнне 61 гектар сухаланă, 133 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

124. **Е. Яковлева** — Канаш МТС-ĕнчи трактористка. Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 34,5 гектар вырăнне 59 гектар сухаланă, 217 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Ĕçкунĕсен минимумне кашни колхозник тултартăр

Колхозниксемпе колхозницăсем кăçал нумайĕшĕ вăйлă тырпул туса илес ĕçре фронта тивĕçлĕ пек, пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Уйхирсенчи çурхи ĕçсем вĕçленчĕç ĕнтĕ. Колхозсем пахча-çимĕçсене те лартса пĕтерсе пыраççĕ. Тырпулсене пăхса çитĕнтерес ĕç пуçланчĕ. Умра тырăсене çум курăкĕсенчен тасатас, ретсем хушшинче ĕçлесе удобрени парса тăрас ĕçсем тăраççĕ. Çав ĕçсене колхозниксен пĕтĕм массин хутшăнмалла.

Çураки вăхăтĕнче уйхирте колхозниксен пĕр пайĕ çеç куллен ĕçре пулчĕ пулсан, халĕ ĕçе кашни колхозник, кашни колхозница хутшăнни кирлĕ. Куллен уйхире тухса тимлĕн ĕçлемесен пачах пулмалла мар. Пурте тислĕк кăларма, ирхи çĕртме тума, çум çумлама, ретсем хушшинче ĕçлеме тухмалла.

Тырăсене пăхса ӳстерес ĕçе лайăх организацилени кирлĕ. Ку тĕлĕшпе СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозниксен обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен» йышăннă постановлени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Тӳрĕ кăмăллă колхозниксемпе колхозницăсем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне хăвăрт тата иртерсе тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Партипе правительство йышăннă постановлени вĕсемшĕн çирĕп закон. Ăна вăхăтра, тĕрĕс пурнăçласа пымалла, фронта хĕрӳллĕн ĕçлесе пулăшмалла.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнса, пирĕн республикăри малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсем 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕнче кашни 250-шар ĕçкунĕ ĕçлесе тума обязательство илчĕç. Çуракин малтанхи итогĕсем çак обязательствăна пирĕн колхозниксем чыслăн пурнăçласа пынине кăтартса параççĕ. Пиншер колхозниксем çуракинче нормăна иртттерсе тултарса пычĕç, куллен икшер-виçшер ĕçкунĕ ĕçлесе турĕç. Вĕсем халĕ те тимлĕн ĕçлеççĕ.

Шăхасан районĕнчи «Красный октябрь» колхоз членĕ Мария Малова юлташ кăçал тăватă уйăх хушшинче колхозра ĕçлесе 198 ĕçкунĕ турĕ. Пысăк хастарлăхпа, куллен, тимлĕн ĕçлеççĕ çунти колхозниксем. Ватă карчăксемпе старикесем те, 12—15 çулти çамрăк ачасемпе хĕрачасем те куллен ĕçре, вĕсем нормăна иртерсе тултараççĕ. О. Чернова, Ф. Александрова, Е. Алексеева, Е. Амурская тата ытти нумай колхозниксем кăçал кашнинех 130—170-шер ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. 61 çулти колхозница Анна Иванова юлташ та 116 ĕçкунĕ тума ĕлкĕрнĕ.

— Вăхăчĕ çапла, алла усса ларни вырăнлă мар халь. Фронтра çĕнтерӳ тума Хĕрлĕ Çара пулăшмалла. Тырпул нумайрах кирлĕ, çакăншăн ĕçлетĕп эпĕ, — тет ватă колхозница Иванова юлташ.

Унăн шухăш-кăмăлĕ—малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсен патриотизмлă шухăш-кăмăлĕ.

Нумай колхозниксем çуракинче тимлĕн ĕçлесе стахановецсен ретне тăчĕç. Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхоз членĕ Мария Соловьева юлташ çураки вăхăтĕнче кулленех ĕç нормине 200 процент тултарса ĕçлерĕ. Нимĕнле ĕçрен те вăл пăрăнмасть, яланах ĕçе тĕплĕн те хăвăрт тăвать. Вăрçă вăхăтĕнче çакăн пек ĕçлесси — уншăн пысăк хисеп. Çак вăхăтрах Мария Соловьева ĕçрен пăрăнса çӳрекенсене, ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлекенсене питех те юратмасть.

Партипе правительство йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсен июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне кашнин 30 ĕçкунĕ ĕçлесе тумалла. Нумай колхозниксем хăйсен çак тивĕçне лайăх пурнăçласа пыраççĕ, анчах тĕрлĕ сăлтавсемпе ĕçе тухмасăр тăракан, ĕçкунĕсен минимумне тултарайман колхозниксем те пур-ха. Обязательнăй минимума пурнăçлас енĕпе юлса пыракан колхозниксене колхоз правленийĕсен ĕçе активлăрах явăçтармалла, ĕçрен пăрăнса çӳреме пăхакансене асăрхаттармалла. Çакăнпа пĕрлех колхозсенче ĕçкунĕсене шута илессине лайăх йĕркелени кирлĕ. Колхозниксене ĕçкунĕсем вăхăтра çырса памалла.

Обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумĕн пĕррĕмĕш срокĕ тухасси икĕ эрне çеç юлчĕ. Партипе советăн тата комсомолăн вырăнти организацийĕсен, агитаторсемпе беседчиксен колхозниксем хушшинче ăнлантарулла ĕçе анлăн сармалла. Хĕрӳ ĕçсен тапхăрĕнче кашни колхозник, колхозницăна дисциплинăллă пулма, колхоз ĕçне активлăн хутшăнма чĕнмелле. Июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне кашни колхозник, кашни колхозница колхоз производствинче ĕçлесе 30 ĕçкунĕнчен кая мар тутăр, хăйĕн чыслă тивĕçне пурнăçа кĕртгĕр.

ВЫРĂССЕН ЧАПЛĂ УЧЕНĂЙĔ К. А. ТИМИРЯЗЕВ

Климент Аркадьевич Тимирязев питĕ паллă вырăс ученăйĕ, ботаник. Вăл Питĕрте çуралнă. 1861 çулта вăл Питĕрти университета вĕренме кĕнĕ, анчах пĕр çулталлăк иртсен ăна студентсен движенине хутшăннăшăн университетран кăларнă. Вăл вара университетран 1866 çулта вольнослушатель шучĕпе вĕренсе тухнă.

К. А. Тимирязев хăйĕн пĕтĕм пурнăçне чăн-чăн наукăна çивĕле кăларассишĕн кĕрешсе ирттернĕ. 1871 çулта Тимирязева Петровски (халĕ Тимирязевски) ялхуçалăх академийĕнче, 1877 çулта—Мускаври университетра профессор пулма суйланă. Ботаника ыйтăвĕсемпе çырнă наукăллă ĕçĕсемпе вăл пĕтĕм тĕнчене паллă пулса тăнă. Тимирязев естествознани ыйтăвĕсемпе темиçе питĕ чаплă кĕнеке çырнă: «Жизнь растения», «Чарльз Дарвин и его учения» ятлă кĕнекесем т. ыт. те çырнă.

Патша правительстви Тимирязева вăл «турра çутçанталăкран хăваласа кăларать» тесе айăпласа хĕсĕрленĕ. 1892 çулта ăна ялхуçалăх академийĕнчен кăларнă, 1911 çулта вăл Мускаври университетран тухса кайнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă революцин малтанхи кунĕсенчех Тимирязев çĕнтерне пролетариат енне тăнă, вăл ватă пулнă пулин те, революцин малтанхи çулĕсенче советсен культура строительствинче активлăн хутшăнса ĕçленĕ.

Республика уйхирĕсенче

Калчасем лайăх

ЕЛЧĔК, июнĕн 1-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсенче халь акнă тырăсем мĕнле шăтса тухнине тĕрĕслесе тухас тата калчасене малалла лайăх пăхса ӳстермелли мерăсем йышăнас ĕç пырать. Ăмăртса ĕçлекен колхозсен председателĕсемпе бригадирсем социализмлă ăмăртăвăн малтанхи тапхăрĕнчи результата пĕр-пĕрне кăтартса параççĕ

Ворошилов ячĕпе таракан, «КИМ», «Марс» колхозсем хăйсен ĕçне пăхса тухрĕç. Ку колхозсенче çурхи тырăсем тикĕс шăтса тухнă. Кăçал пысăк тырпул пама шантараççĕ вĕсем.

Комиссисем калчасене тĕрĕслесе йышăннипе пĕрлех, малашне тумалли ĕçсене те кăтартса хăвараççĕ.

С. МАКАРОВ.

Обязательствăна пурнăçа кĕртрĕмĕр

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Çуракине тухса манăн бригада МТС-ăн 1-мĕш бригадипе ăмăртса ĕçлеме социализмлă договор турĕ. Эпир тракторсемпе çураки планне 150 процент тултарма, çак хушăрах 200 килограмм горючи, 100 килограмм автол перекетлесе хăварма обязательство илтĕмĕр.

Халĕ ĕнтĕ районра çураки ĕçĕсем вĕçленчĕç. Ăмăрту обязательствине мĕнле пурнăçланине пăхса тухма вăхăт. Начар мар ĕçлерĕ бригада. План тăрăх 477 гектар сухаламаллаччĕ, эпир çемçе суха çине куçарса шутласан, 755 гектар сухаларăмăр, 290 килограмм горючи перекетлесе хăвартăмăр. Çапла çураки планне манăн бригадăри трактористсем 158 процент тултарчĕç.

Çакăн пек хастарлăхпа ĕçлеме пире Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи боевой приказĕ çĕклерĕ. Тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсемпе тан ĕçлес тĕллеве лартнă эпир хамăр умма. Бригадăри уйрăм трактористсем çуракинче питĕ хастарлăн ĕçлерĕç. Акă Мария Сорокина трактористкăнах илер. Вăл кăçал ХТЗ—НАТИ тракторпа ĕçлет. Норма тăрăх сменăра унăн 7,2 гектар сухаламалла. Вăл кулленех 10 гектартан пуçласа 14 гектара çити сухаласа пычĕ. Çапла Сорокина юлташ 80 гектар сухалас вырăнне çураки вăхăтĕнче 203 гектар сухаларĕ, 405 килограмм горючи перекетлерĕ, çураки планне 253 процент тултарчĕ.

Çавăн пекех ытти трактористсем те тухăçлăн ĕçлерĕç.

Ф. АФОНДЕРКИН,
2-мĕш бригадăн бригадирĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 31-мĕшĕнче Кубань тавраш Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, çапăçусем пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Майăн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 нимĕç автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, 2 артиллери батарейине пусарса лартнă, тăшманăн пĕр буксирне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 2 баржине путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем нимĕç пехотине 2 рота таран пĕтерсе тăкнă, 12 пулемет точкине çĕмĕрнĕ тата артиллерипе миномётсен темиçе батарейине пусарнă. Лейтенант Колосков юлташ ертсе пыракан разведчиксем тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем гранатăсем ывăтса 3 дзота ишĕлтернĕ, гитлеровецсен пĕр ушкăнне пĕтерсе тăкнă, вара пĕр сухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахри пĕр участокра пирĕн разведчиксем тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотине асăрханă. Пĕр чаçăн артиллеристĕсем персе гитлеровецсене саланса янă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем тăшманăн 2 орудине тата боеприпассем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем 2 нимĕç танкне персе çĕнтернĕ тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Пĕр участокра нимĕç автоматчикĕсен роти пирĕн 2 подразделени хушшине савăлланса кĕрсе кайма хăтланнă. Макушкин сержантпа Хорунжий сержантăн стрелковăй подразделенийĕсем тăшмана çывăха янă та ун çине пулеметсемпе пеме тытăннă. Нимĕçсем пирĕн позицисем умĕнче хăйсен 32 вилĕлине пăрахса хăварса, васкасах каялла чакнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн артиллеристсем тăшманăн позицийĕсемпе çывăхри тылĕсене пенĕ. Нимĕçсен 3 дзотне тата 4 блиндажне ишĕлтерĕç, грузсем тиенĕ 7 вагонне çĕмĕрнĕ. Кĕçĕн лейтенант Балабанов юлташ нимĕç самолетне ручной пулеметпа персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ майăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшманăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, пассажирсем ларса пыракан 2 вагон тата автомашинăсемпе самолет моторĕсем тиенĕ 10 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Ленинград облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ халăх пурăнакан пĕр пунктри нимĕç гарнизонне тапăннă. Гитлеровецсем хирĕç тăмасăрах тарса саланнă. Партизансем çав ялта тăшманăн горючи складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Рига хулинче калама çук тискер ĕçсем тăваççĕ. Гитлерла çынçиекĕсем хулари мирлĕ пурăнакан çынсене темиçе пин çынна асаплантарса тата персе вĕлерчĕ. Фашистла палачсем Ригăран 12—15 километрти Рамбул районĕнче çынсене массăллăн асаплантарса вĕлереççĕ. Ригăри пур тĕрмесем те тытса хунисемпе тулса ларнă. Гитлеровецсем ятарласа тунă концентрациллĕ лагерьсем те лăк тулли. Вĕлернисен тата тытса хунисен пурлăхĕсене нимĕçсем Германие илсе кайнă. Халăха питĕ хаяррăн тыткалаççĕ пулин те, халăх оккупантсене вăйлăн хирĕç тăрать. Совет патриочĕсем нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсене вĕлереççĕ, склачĕсене çунтара-çунтара яраççĕ.

* * *

Югославри патриочĕсем Челебичь местечки патĕнче пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче нимĕç оккупанчĕсен пысăк отрядне аркатса тăкнă. Çав çапăçура партизансем 4 нимĕç офицерне тыткăна илнĕ. Тинĕс çумĕнчи районра кĕрешекен партизансен отрячĕ итальянецсен пысăк колоннине салатса янă. Словенире партизансем Сава станцине çунтарса янă, чугунçула темиçе тĕлте сирпĕнтерсе янă тата пăсса хунă.

Июнĕн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чаçри артиллеристсем тăшман позицине персе 4 дзота тата 2 блиндажа çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра çĕрле пирĕн разведка тăвакан отряд тăшман тăнă вырăна кĕрсе кайнă та темиçе вунă гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, унтан темиçе нимĕçе тыткăна илсе, аванах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Лисичанск районĕнче нимĕçсем, хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрма хăтланса, умлă-хыçлă икĕ атака тунă. Пирĕн подразделенисем çав аткăсене сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Гитлеровецсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне ывăтса янă.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромне тапăннă та нимĕçсен çĕр çинче ларакан 10 самолетне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем нимĕç пехотине пĕр батальона çити саланса янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсем пыв урлă каçма хăтланнă. Пĕр чаçăн боевой охраненийĕ тăшмана пăшалпа тата пулеметпа персе, 20 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Севск районĕнче пĕр чаçри артиллеристсем тăшманăн войскисем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăна пенĕ. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, çав тапăнура артиллеристсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белорусси районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшман гарнизонне тапăннă. Партизансем 63 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен пĕр бронемашина, 2 автомашина тата винтовкăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр отрядри партизансем тăшман самолетне пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 39-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 113-мĕш полкран хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă поляк салтакĕ Людвиг В. çапла каласа панă: «Эпĕ Познань воеводствинчи Быдгощ уездĕнче пурăнтăм. Нимĕçсем пирĕн яла пĕтĕмпех çаратса тухрĕç. Вулăс старости пулса тăракан нимĕç çынни, Гриль ятлăскер, хресченсен çĕрне 500 морг ытла тытса илчĕ, тата тепĕр нимĕç, Беккер ятлăскер, 200 морг ярса илчĕ. Гитлеровецсем поляксене хăйсен тарçисем туса хучĕç, вĕсене чурасене тыткаланă пек тыткалаççĕ.

Иртнĕ çулхи август уйăхĕнче мана вăйпа нимĕç çарне илчĕç. Эпĕ 39-мĕш дивизие лекрĕм, вăл ун чухне Бельгире тăратчĕ. Кăçалхи март уйăхĕнче пире Российйăна ячĕç. Поездпа пынă чухне эпир, поляксем, хамăр хушăмăрта çапла калаçса татăлтăмăр: эпир Гитлершăн вăрçма пулмастпăр, вырăссем патне каçса каятпăр, терĕмĕр. Нимĕçсем ĕлĕк те пирĕн çĕршывăн усал тăшманĕсем пулнă, вĕсем халĕ те çав-çавах пирĕн тăшмансем. Гитлерла ирсĕрсене пĕтĕмĕшпех лӳчĕркесе тăкиччен кашни поляк патриочĕ нимĕçсене хирĕç çапăçмалла, терĕмĕр».

* * *

Калинин фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр подразделени Максимиха ялне нимĕçсенчен туртса илсе ирĕке кăларнă. Ял тулашĕнче 12 красноармеец виллине тупнă. Çакна лайăх пĕлнĕ: çав красноармеецсем çапăçура аманнă хыççăн нимĕçсен аллине тыткăна лекнĕ, гитлеровецсем вĕсене тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Вĕсен ӳчĕсем çинче çĕçĕпе чиксе пĕтернĕ йĕрсем, çунтарнă, вырăнсем çаплах палăрса тăраççĕ.

* * *

Француз патриочĕсем Брестра нимĕçсен хĕçпăшалсем турттарса пыракан эшелонне сирпĕнтерсе янă. Гаврта пĕр кун хушшинче 5 нимĕç морякне вĕлернĕ. Париж тулашĕнче пĕр ушкăн шофер, нимĕçсем вăрçă грузĕсем турттарманшăн вăйпа мобилизацилениĕскерсем, гитлеровецсен хĕçпăшаллă хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те тарнă. Патриотсем ирĕклĕ стрелоксемпе пĕрлешсе автомашинăсемпе хĕçпăшалсене вĕсен аллине панă.

Халăх таланчĕсен смотрĕ

ВЦСПС тата СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ Пĕтĕм Союзри профсоюзсен художествăллă пултарулăх смотрне ирттерме йышăннă.

Вырăнсенчи смотр июлĕн 14-мĕшĕнче пуçланать. Смотрăн малтанхи тапхăрĕ предприятисемпе учрежденисенче пулса иртмелле. Чи лайăх коллективсем тата смотра уйрăммăн хутшăнаканнисенчен чи лайăххисем пĕтĕм хуларин е районри смотра хутшăнаççĕ.

Смотрта малти вырăна тухакансене премисемпе грамотăсем парса парнелеççĕ.

Театрсем тата художество шкулĕсем смотра хатĕрленекен кружоксене творчествăллă консультацисем пама представительсем уйăрса яраççĕ.

Пĕтĕм Союзри Крупская ячĕпе тăракан художествăллă пултарулăх çуртĕ смотра хутшăнакан кружоксене пулăшма пĕчĕк библиотека хатĕрлет тата «Репертуар листокĕн» уйрăм номерне кăларать.

Художествăллă пултарулăх смотрĕ икĕ уйăха тăсăлать.

Государствăн 1942 çулхи Военнăй Заемне вырнаçтарнин итогĕсем

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă ыйтăвĕсене тивĕçтернĕ çĕрте государство заемĕсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Государствăн 1942 çулхи Военнăй Заемне вырнаçтарнă çĕре совет халăхĕ активлăн хутшăнчĕ. Вăл заема çырăнса, тăван Хĕрлĕ Çара вĕçĕмсĕр юратнине уççăн кăтартса пачĕ. Заема пысăк çĕкленӳпе ăнăçлăн вырнаçтарни пирĕн государствăпа халăх, фронтпа тыл тăшмана çĕмĕрсе тăкассишĕн пĕрлĕхлĕ пулса кĕрешнине уççăн кăтартса пачĕ. Иртнĕ çул Военнăй Заема кĕске вăхăт хушшинчех 13 миллиард тенкĕлĕх ытла вырнаçтарнă.

Пирĕн республикăри ĕçсынисем Государствăн 1942 çулхи Заемĕ тухнă хыпара патриотла пысăк туйăмпа кĕтсе илчĕç. Заем тухнă ятпа пулса иртнĕ митингсемпе пухусенче республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшса тăма пулса тупа турĕç.

Диктор радио тăрăх Государствăн 1942 çулхи Военнăй Заемне кăларни çинчен пĕлтерсенех, республикăри предприятисенче, учрежденисемпе колхозсенче заема çырăнас ĕç пуçланчĕ.

Улатăр тата Шупашкар хулисенчи, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри т. ыт. районсенчи ĕççыннисем Военнăй Заема пĕррĕмĕш кунах малтан палăртса хунă суммăран ирттерсе çырăнчĕç. Заема вырнаçтарас ĕç уйрăмăнах Куславкка комбинатĕнче ăнăçлăн иртрĕ. Заводри стахановецсем хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕпе тăшмана çĕмĕрсе тăкнă çĕре пама пулни çинчен пĕлтерчĕç. Яворский слесарь, уйăхра 800 тенкĕ илекенскер, заема 2.000 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Çавăн пекех уйăхне 670 тенкĕ илекен Климашевский токарь те заема 1.150 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Вĕсен примерне заводри нумай рабочисем хăвăрт йышăнса илчĕç.

Иртнĕ çул Военнăй Заема республикăри колхозниксем нихăçан пулман çĕкленӳпе, организованно çырăнчĕç. Чкаловски районри «Маяк» колхозра темиçе сехет хушшинчех заема 100.00[illegible] тенкĕлĕх сарнă, заем укçине 96.00[illegible] тенкĕ çийĕнчех тӳленĕ.

Колхоз председателĕ Минаев юлташ 4.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине çав кунах тӳлесе татнă. Унăн примерне йышăнса илсе, Ахсянов, Сабирзуллин, Шарафутдинов колхозниксем 1.500-шар тенкĕлĕх çырăннă, укçине те кунах тӳлесе татнă.

Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозра 1941 çулта заем пĕтĕмпе те 9.065 тенкĕлĕх çеç сарнă. Иртнĕ çул унта Военнăй Заема пĕр сехет хушшинче кăна 13.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

Тăван çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕçлĕхе тарăннăн туйса тăракан вар[illegible] колхозниксемпе колхозницăсем, фронтран аманса таврăннă красноармеецсем тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас шухăш-кăмăлпа çунса, çĕнĕ заема çырăнчĕç, хыççăнах укçине те çийĕнчех [illegible]се татрĕç. Ишлей районĕнчи «Çĕн Хунав» колхозри 67 çулти Яков Алексеев (унăн виçĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче) Военнăй Заема 4.500 тенкĕлĕх çырăннă, укçине те çийĕнчех парса татнă. Çакăн пек тĕслĕхсене çĕршер илсе кăтартма пулать.

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне политикăллă пысăк çĕкленӳпе, организованно ирттернипе пула, 19[illegible] çулта заем сарас тĕлĕшпе бюджет палăртнă суммăна икĕ кун хушшинче тултарнă. Колхозниксемпе единоличниксем заем укçине çийĕнчех тӳлесе татнă.

Халĕ республикăра Государствăн 1942 çулхи Военнăй Заемĕ тăрăх расчетсем туса пĕтерне, заема пĕтĕмпе 67 миллион та 13 пин тенкĕ укçа пухăннă. Çакă вăл 1942 çулхи бюджет суммин 140 процентне пулать, урăхла каласан, 1941 çулхи заема вырнаçтарнинчен виçĕ хут ытларах.

Иртнĕ çул заема вырнаçтарас ĕçре çитменлĕхсем те чылай пулчĕç. Хăш-пĕр районсенче комсодсем, заем уполномоченнăйĕсем, перекет кассисем, финанс органĕсен работникĕсем çителĕксĕр ĕçлерĕç. Улатăр, Первомайски, Куславкка, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче тата Çĕмĕрлепе Шупашкар хулисенче заема малтан çырăннисен хушшинче юлашки вăхăтра чылай чакнă. Производствăна çĕнĕрен ĕçлеме кĕнĕ юлташсене заем çырăнас ĕçе явăçтарман.

Ялсовечĕсемпе перекет кассисенче ĕçлекенсем заем облигацийĕсене çыннисене парас ĕçе контрольлесе ман пирки, хăшпĕр районсенче ку вăрăма тăсăлнă.

Перекет кассисем заем облигацийĕсем тытакансем хушшинче çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем выляв тиражĕсем тăрăх заем облигацийĕсене тĕрĕслес ĕçе тĕлĕксĕр туса пыраççĕ, справка сĕтелĕсем пур çĕрте те мар организациленĕ.

Государство заемĕсене вырнаçтарас ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле. Заем тытакансем хушшинче ĕçлесси — комсодсен, перекет кассинче тата финанс органĕсенче ĕçлекенсен ялан задачи.

А. ПОКРОВСКИЙ.
Чăваш АССР Перекет кассисен Госкредит Управленийĕн начальникĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Республикăри „Хисеп хăми" проекчĕн чи лайăх эскизне тăвас тĕлĕшпе конкурс ирттересси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче республикăри промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансен «Хисеп хăми» проекчĕн чи лайăх эскизне тума конкурс ирттерме йышăннă тата конкурсăн условийĕсене çирĕплетнĕ.

Совнарком «Хисеп хăми» проекчĕн лайăх эскизĕсене тăвакансене пама виçĕ премии тунă: пĕррĕмĕш премии — 2.000 тенкĕ, иккĕмĕш премии — 1.500 тенкĕ, виççĕмĕш премии — 1.000 тенкĕ

Советсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем

М. И. КАЛИНИН

Вăрçă уйрăм çынсене кăна мар, пĕтĕм государство организмне те—унăн учрежденийĕсене, предприятисене, организацисене, пуринчен ытла государство влаçĕн вырăнти органĕсене—советсене, пур тĕрлĕ задачăсене те пурнăçлаканскерсене, питĕ хытă тĕрĕслерĕ.

Совет влаçĕн вырăнти органĕсемпе вĕсен руководителĕсем промышленноçпа транспорта тата ялхуçалăхне ăнăçлăн ĕçлеттерессишĕн, вăрçăпа мобилизаци ĕçĕсене тăвассишĕн, халăха апат-çимĕç парса тăрассишĕн, аманнă боецсен госпитальĕсене чи лайăх çуртсенче вырнаçтарассишĕн, фронтовиксен, отечественнăй вăрçă инваличĕсен çемьисемшĕн тимлĕн тăрăшассишĕн, хуласемпе халăх пурăнакан пунктсене лайăхлатассишĕн тата ытти ĕçсемшĕн те ответлă пулса тăраççĕ. Пирĕн облаçсен пысăкăшне, район центрĕсем область центрĕсенчен инçе пулнине, çыхăну йывăрлăхĕсене, вăрçă обстановкине шута илсен—çаксем вĕсем пурте советсен ĕçне йывăрлатаççĕ, вĕсемшĕн çĕнĕ йывăрлăхсем кăларса тăратаççĕ.

Хăйĕн калăпăшĕпе тата тĕрлĕ еплĕ пулнипе советсен ĕçĕ аслă та ответлă. Паллах ĕнтĕ, центртан кашни уйрăм предприяти, учреждени тата организаци ĕçĕсене ертсе пыма мар, вырăнти хуçалăхăн, культурăн, йăлан тĕрлĕ пайĕсене сăнаса пыма та хĕн. Çавăнпа та кадрсем суйласа илес, вĕсене вĕрентес, хуçалăхпа культурăн пĕр-пĕр облаçĕнче, çавăн пекех тата районсенчи политикăпа администраци ĕçĕнче тивĕçлипе лайăх ĕçлеме хăнăхтарас тĕлĕшпе те область руководствин пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле.

Вырăнти ыйтусене татса парас тĕлĕшпе район чи паллă сыпăк пулса тăрать. Сталин юлташ калашле, унта колхоз строительствин тата тĕрлĕ хуçалăх ĕçĕсен ыйтăвĕсем пухăнаççĕ. Вăрçă районри организацисен пĕлтерĕшĕпе вырăнне тата ытларах ÿстерчĕ, мĕншĕн тесен вĕсем фронтпа тыла апат-çимĕç тăратакан хуçалăх епле аталаннишĕн, оборона продукцийĕ тăратакан вырăнти промышленность епле ĕçленишĕн тÿрремĕнех ответ тытаççĕ.

Партин райком секретарĕпе райсовет исполкомĕн председателĕ—районра тĕп фигурăсем пулса тăраççĕ. Калас пулать, вĕсем хăйсен вырăнне тивĕçлĕ пулсан тата хăйсен ĕçне çителĕклĕ туса пырсан, çавăн пек района область енчен ертсе пырасси те чылай çăмăлланать тата районра ĕçсем те ăнăçлă пыраççĕ. Çак принцип вăл советсен тĕрлĕ отделĕсен ĕçĕсем тĕлĕшпе те тĕрĕс.

Хăй вăхăтĕнче Сталин юлташ „Кадрсем пурне те татса параççĕ" текен лозунг кăларса тăратрĕ. Çав лозунга кăларса тăратса, Сталин юлташ çапла ăнлантарса пачĕ: çак лозунг вăл „пирĕн руководительсене пирĕн работниксемшĕн, пысăккисемшĕн" те, „пĕчĕккисемшĕн" те, вĕсем кирек епле ĕçре ĕçлеççĕ пулсан та, тимлĕн тăрăшма, вĕсене лайăх пăхса ÿстерме, пулăшмалла чухне пулăшма, малтанхи ĕçлĕхсемшĕн хавхалантарма, малалла каймалла пулăшма т. ыт. те хушать", терĕ.

Чи йывăрри, чи пахи—çын валли ăна тивĕçлĕ вырăн тупасси пулса тăрать. Ахальтен мар калаççĕ: теме хăйĕн вырăнне лартсан—ĕç таять вара, теççĕ. Администрацине ертсе пырас ăсталăхăн секречĕ çакăнта ĕнтĕ.

Советсен ĕçĕсем çав тери нумай енлĕ пулни облаçра паллă вырăн йышăнса тăракан хуçалăх отраслĕсене яланах асра тытса тăрассине ăнма хушни пулмасть. Партин Центральнăй Комитечĕ ĕçĕн тĕрлĕ отраслĕсене ертсе пыма уйрăм секретарьсем лартма хушни ăнсăртран пулнă япала мар.

Нумай облаçсенче хуçалăхăн татса паракан отраслĕсем 5—7 пур, вĕсем лайăх ĕçлесен, пĕтĕм облаçăн ĕçĕ ăнăçать. Облаçра руководство çавсем çине ытларах çаврăнса пăхни вăл тĕрĕс туни пулать. Сăмахран, Мускав облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче пахча-çимĕç ÿстерасси çине, Узбекистанра хлопок туса илесси çине, Калинин облаçĕнче йĕтĕн туса илесси çине, хĕвелтухăçĕнчи облаçсенче—тĕштырă туса илесси çине ытларах çаврăнса пăхаççĕ. Çак принцип промышленноçра та паларать. Облаçра, сăмахран, пир-авăр фабрикисем е металлурги завочĕсем ытларах пулĕç, паллах, производствăн çав енĕсем çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Вăрçă нумай улшăнусем кÿчĕ, пĕр-пĕр область умĕнче халиччен пулман çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Вăрçă вăхăтĕнче чылай облаçсенче экономикăн çĕнĕ отраслĕсене аталантармалла пулчĕ. Ĕлĕкрех ялхуçалăх пуçпулса тăнă вырăнсенче промышленность малти вырăна тухса тăчĕ, ĕлĕкрех пуринчен ытла промышленность пуçпулса тăнă вырăнсенче ялхуçалăхĕн ыйтăвĕсемпе те вăйлăн интересленме, хуçалăх культурисем ĕрчеме пуçларĕç. Çав çĕнĕ задачăсем совет работникĕсен кадрĕсем умне вăйлăн тухса тăчĕç.

Кадрсем суйласа илес задачăна вăрçă вăхăчĕ йывăрлатрĕ, мĕншĕн тесен опытлă работниксене нумайĕшне армине илнĕ. Кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен çынсем умне çарама тивĕçлĕ мар çынсенчен ертсе пыракан çĕнĕ работниксем хăвăрт хатĕрлес задача туса тăчĕ. Тивĕçлĕ опыт çук çынсене ертсе пырас ĕçе хутшăнтарасси вăл çăмăл ĕç мар, пушшех те хушнă ĕçшĕн ответлăх ÿссе пынă вăхăтра вăл çăмăл ĕç мар. Начар ĕçленине хальчĕтса тăма çук. Çавăнпа та кадрсем суйласа илнĕ чухне çын пĕр-пĕр ĕçе юрăхлине, вăл ÿсме пултарассине чухласа илме куçсем питĕ çивĕч пулмалла. Çĕнĕ кадрсене ÿсме кирлĕ условисем туса пымашкăн, çĕнĕ работниксене хальхи вăхăт ыйтнă пек ĕçлеме вĕрентмешкĕн мĕн кирлине пурне те тумалла, çакă ĕнтĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Вăрçă вырăнти советсен ĕçĕсене йывăрлатрĕ çеç мар, вĕсем умне вăл çĕнĕ ыйтусем те чылай кăларса тăратрĕ. Чи малтан облаçри пур предприятисене те фронт валли вăйлăн ĕçлеме юрăхлă тумалла пулчĕ, темĕн чухлĕ çĕнĕ предприятисене, пуринчен ытла тăшман пырса кĕнĕ территорисенчен эвакуациленĕ предприятисене ĕçе ямалла пулчĕ. Çав енчен пăхсан, хĕвелтухăçĕнчи облаçсенче тата союзлă республикăсемпе автономиллĕ республикăсенче чăн-чăн промышленность революцийĕ пулса иртрĕ темелле. Вĕсем патне вăрçă пуçланнăранпах пĕр чарăнмасăр тĕрлĕрен завод оборудованийĕсем тата пиншер рабочисемпе вĕсен çемьисем пырса тăчĕç. Пырса тăракан оборудование вĕсен хăвăртрах вырнаçтарса, производствăна хăвăртрах йĕркелесе ямалла пулнă, эвакуациленĕ рабочисемпе техникла персонал валли тата вĕсен çемьисем валли кирлĕ пек пурнăç условийĕсем туса памалла пулнă. Тĕрĕссипе илсен, советсем çав тери пысăк ĕç турĕç, ăна вĕсем пĕтĕмĕшпе илсен лайăх вĕçлерĕç. Пĕр иккĕленмесĕрех çапла калама пулать: пирĕн парти, совет тата техника кадрĕсем хăйсен организациллĕ пысăк пултарулăхне пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕç, вĕсем истори нихçан курман практика шкулĕ витĕр тухрĕç.

Анчах та вăрçă обстановки çак çитĕнÿсемпе лăпланса ларма хушмасть. Пирĕн пĕтĕм промышленность, пуринчен ытла çар промышленноçĕ, Германи промышленноçне хирĕç вилĕмле кĕрешет. Хăйсен организованноçĕпе тата техника енчен малта тăнипе мухтанакан нимĕçсем, пусмăрланă халăхсене каторгăри пек ĕçлеттерсе, хĕçпăшалпа боеприпассем туса кăларас тĕлĕшпе пирĕнтен иртсе каясшăн тăрăшаççĕ. Çав кĕрешÿре пирĕн тепле пулсан та çĕнтермелле. Фронта çар материалĕсем ытларах та ытларах парса тăмашкăн пирĕн промышленноçăн ытларах та ытларах аталанса лайăхланса пымалла. Çак ĕçре советсен тата вĕсен руководствин хăйсен территорийĕнчи предприятисем вĕсен производство планĕсене тултарас тĕлĕшпе пĕрмаях малалла кайса пычăр тесе мĕн тума пуррине те, тума май çуккине те тумалла.

Вырăнта туса пыракан пур ыйтусене те вăрçă хăвăрт татса пама хушать. Районри ертсе пыракан работниксен директивăсене пурнăçланипе çеç çырлахмалла марринне, ыйтусене лартса вĕсене татса панă чухне хăйсен пуçарулăхне кăтартмаллине, час-часах çÿлти органсенчен кăтартусем çук тесе витĕнсе, ĕçлемесĕр ларма юраманнине ăнланса илмелле.

Промышленноçа ертсе пырас тĕлĕшпе вырăнти советсем умне лартакан требованисем кашни кун ÿссе пыраççĕ. Манăн кунта хулари районри советсем вырăнти промышленноçа аталантарса унăн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе епле вырăн йышăнмалли çинчен калас килет. Союзлă промышленность ĕçĕсемшĕн тивĕçлĕ наркомат ответлă пулсан, вырăнти промышленность ĕçĕсемшĕн советсене ертсе пыракансем тÿрремĕнех ответ тытаççĕ.

Вăрçăн пĕтĕмĕшлĕ экономикинче вырăнти промышленность чылай паллă вырăн йышăнса тăрать. Оборона продукцийĕ тÿрремĕнех тăратнисĕр пуçне, вăл çавăн пекех Союзлă промышленность валли çурма фабрикатсем парса тăрать. Çакă ĕнтĕ вырăнти промышленность хăйĕн производство планĕсемпе заданисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе советсен ертсе пыракан работникĕсем çине пысăк ответлăх хурать. Анчах советсен работникĕсем, паллах ĕнтĕ, Пĕтĕм Союз промышленноçĕпе республика промышленноçĕн ĕçĕсемшĕн те чылай ответлă пулса тăраççĕ. Производство хăй аталанса пыни пурăнмалли условисене, коммунальнăй обслуживани ĕçне, хваттерсене хутса ăшăтас ĕçе, апатлантарас ĕçе лайăхлатма, вырăнти транспорта лайăх йĕркелесе яма хушать. Çак факторсем ĕç тухăçлăхне, ĕç результачĕсене тÿрремĕнех улăштараççĕ. Пĕр çакă кăна ĕнтĕ промышленность ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан ыйтусене татса парас тĕлĕшпе советсен вырăнĕ епле пысăк пулнине кăтартса парать.

Уралпа Хĕвеланăç Çĕпĕр хальхи вăхăтра çĕршывăн чи индустриллĕ районĕсем пулса тăчĕç. Нимĕçсенчен ирĕке кăларнă районсенче те промышленность ура çине тăма пуçлать, ĕç вăйĕ, оборудовани, инвентарь пухăнать, производствăри хăвăртлăхсем ÿссе пыраççĕ. Çавăн пек условисенче районпа область руководителĕсен хуçалăха ура çине тăратас ĕçĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе ĕçлемелле пулать, хăш ĕç пахарах тата кирлĕрех пулни çинчен кунта каласа пама та хĕн. Пурте кирлĕ, пурне те васкавлăн тумалла. Кунта, нимĕçсем çаратса, аркатса пĕтернĕ районсенче, фронта пулăшас ĕçе хăвăртрах, тухăçлăрах хутшăнасси, вăл тĕлĕшпе мĕнпур ресурссемпе тата оккупаци вăхăтĕнче халăх нимĕçсене çав тери курайми пулнипе туллин тата тивĕçлипе усă курасси—совет работникĕсен тĕп шухăшĕ пулса тăмалла. Нимĕç пусмăрĕ айĕнче пулса курнă çынсем ĕçлеме çав тери васкаççĕ. Çĕршыва, унăн йĕркисене хÿтĕлесси вĕсемшĕн пурнăç пекех хаклă пулса тăчĕ, тăшман оккупациленĕ çĕршывра пурăнассинчен тискертерехчи тата йĕрĕнчĕкрехчи урăх нимĕн те çуккине вĕсем тÿссе курчĕç. Çавăнпа та ирĕке кăларнă районсенче ĕç нихăçан курман хастарлăхпа, питĕ тимлĕн пулса пырать, унта фронта ытларах тата хăвăртрах пулăшас тесе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Паллах ĕнтĕ, нимĕçсенчен хăтарнă районсенчи хуçалăха ура çине тăратасси çăмăл ĕç мар. Материальнăй чаçа кунта нимĕçсем нумай аркатнă, халăх йышĕ чакнă, тăрса юлнă халăх начарланса çитнĕ; вылях-чĕрлĕхе пĕтĕмĕшпех тенĕ пекех пĕтернĕ. Çаксем ĕнтĕ хуçалăха çĕнĕрен ура çине тăратас ĕçе чăрмантараççĕ, анчах вăл çавах та пĕр чарăнмасăрах малалла кайса пырать. Çак ĕçе ытти районсем пулăшни тата халăхăн хăйĕн кăмăлĕ малалла ярать. Совет аппарачĕн вара организаци чи лайăх формисене тупма, пĕрлехи вăя чи кирлĕ çĕре яма пĕлмелле, вăл районсене часрах ура çине тăратса, фронта пулăшас ĕçе хутшăнтармалла.

Советсен ĕçĕнче ялхуçалăх ыйтăвĕсем чи паллă вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăраççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес тĕлĕшпе колхозсене чăннипе пулăшас тесен, ялсовечĕн кашни колхоз пурнăçне лайăх пĕлмелле, колхозри ĕç хатĕрĕсемпе пуринпе те тивĕçлипе усă курма, унăн туртăм вăйĕпе тата халăх йышĕпе тĕплĕн усă курма тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать. Кая юлса пыракан колхозсем çине уйрăмăнах вăйлăн çаврăнса пăхас пулать; вĕсен руководителĕсене ялхуçалăх ĕçĕсен планне пурнăçлас енĕпе те, государство умĕнчи парăмсене татас тĕлĕшпе те татăклă мерăсем йышăнма хушас пулать.

Советсен умне правительство вăрçă пирки тухнă питĕ кирлĕ ыйтусем кăларса тăратнă, сăмахран, фронтовиксемпе отечественнăй вăрçă инваличĕсен çемьисене лайăхрах условисем туса парасси. Вырăнти работниксен ĕç темĕн чухлĕ пулин те, вĕсен ку ĕç çинчен яланах шухăшламалла тата чи кирли—правительствăн решенийĕсене форма енчен мар, ăшчик енчен пурнăçа кĕртсе пымалла. Ман шутпала ку ĕçе пур çĕрте те общество вăйĕсене—комсомола, профсоюза, ялсенче—колхозри общественноçа хутшăнтармалла. Совет çĕршывĕнче вăрçă инваличĕсене, фронтовиксен çемьисене пур енчен те вирлĕн пулăшса пымалла. Анчах та çакă вăл çемьери ĕçлеме пултаракан çынсене ĕçрен хăтарма хушнине пĕлтермест.

Çакăнпа пĕрлех манăн ашшĕ-амăшĕсене çухатнă ачасемпе ĕçлессине вăйлатма кирли çине тата ача-пăча учрежденийĕсене ертсе пырассине лайăхлатма кирли çине кăтартса хăварас килет. Ку вăл питĕ пысăк тата ответлă ĕç, ăна çав ĕçе юратакан, хуçалăх тĕлĕшĕнчен пултаракан, хастарлă работниксене хушас пулать. Культурăллă, ачасене юратакан, педагогика енчен пултаракан, çав вăхăтрах тата лайăх хуçасем пулса тăракан çынсене ăстан тупма пулать-ха, тейĕç. Паллах, ку вăл йывăр задача. Анчах та лайăх руководительсене упрасан тата япăххисене улăштарса пырсан,—кадрсем çитĕнсе пырĕç, вĕсем халĕ те пирĕн сахал мар; пирĕн çĕршывра ачасем чи хаклă пуянлăх пулнине кăна асра тытса тăрас пулать.

Совет органĕсем умĕнче вăрçăпа çыхăнса тăракан çав тери пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсене пурнăçласси нумай енчен вырăнти советсен ĕçĕсене тĕрĕс йĕркеленинчен килет. Чăнахах та, халĕ кашни ĕçех паха, вăл хăш енчен те пулин халăх массисене тивет.

Пĕчĕк примерах—учрежденисемпе предприятисенчи администраци ĕçнех илер. Администраци паракан распоряженисенче мĕншĕн çавăн пек распоряжени панине каласа парсан аван пулмалла, май килнĕ таран ăна пурнăçа кĕртмелли майсене кăтартса памалла, ăна пурнăçа кĕртни епле паллă вырăн йышăннине кăтартса памалла. Ку ĕнтĕ, паллах, руководителĕн ĕçне йывăрлатать, анчах çав вăхăтрах вăл çав распоряжение пурнăçа кĕртекенĕн ĕçне çăмăллатать, распоряжение тĕрĕс пурнăçа кĕртнине ĕненме май парать. Сталин юлташăн приказĕсем вăл енчен совет работникĕсемшĕн кăтартуллă чи лайăх тĕслĕхсем пулса тăраççĕ. Илĕр-ха унăн майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тухнă юлашки приказне, унăн ăшчиккипе форми çинчен тĕплĕн шутласа пăхăр-ха; вăл сире хăвăрăн распоряженисене лайăхрах кăларма та пулăшĕ.

Советсем—влаçăн демократиллĕ органĕсем. Вĕсен ĕçĕсем пĕр-пĕр ĕçĕн калăпăшĕнчен тата вырăнти влаçсен законпа кăтартнă чиккинчен çеç килмеççĕ. Советсем вырăнти халăх демократи йĕркипе суйланă органсем пулса тăнă пирки, халăха совет ĕçне хутшăнтарасси, советсен практикăллă ĕçĕнче пĕтĕм халăха политика тĕлĕшĕнчен пĕтĕçтересси вĕсен задачи пулса тăрать.

Советла демократизм хăйĕн пĕтĕм принципĕ тăрăх ĕçлĕхлĕ пулмалла, производствăллă кашни коллектив хăйĕн ĕçĕн результачĕсемпе интересленмелле. Руководителĕн обязанноçĕ вара вăтам работнике—инженер-и вăл, рабочи-и, колхозник-и, совет служащийĕ-и, хăйĕн производствăллă группи урлă государствăн пĕтĕмĕшле политикине явăçтарасси, хальхи вăхăтра—çĕнтерÿ тăвассишĕн хастарлăн ĕçлеме хутшăнтарасси пулса тăрать.

Советсем хăйсен историллĕ аталанăвĕнче пултаруллă вăйсене палăртрĕç, унтан пĕтĕм тĕнче тĕлĕнчĕ, вăл вăйăн çăлкуçĕсем массăсенче пулаççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ кашни совет работникех çав вăхăтрах массăсем патне пыма пĕлекен политик та пулса тăмалла, массăсене хальхи вăхăтри тĕп задачăна—нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкас задачăна пурнăça кĕртес ĕçе хутшăнтарма пĕлекен пулмалла.

Республикăра кросс мĕнле пырать

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ пуçланнăранпа вунă кун иртрĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра кроса 42 пин те 600 çын хутшăннă, вĕсенчен 38.250 çын нормăсене панă.

Шупашкар, Ишлей, Советски районĕсенче кросс организованно ертсе пырать. Туллимар даннăйсем тăрăх, Шупашкар районĕнче июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне кроса 2.397 çын хутшăннă, 2.246 çын нормăсене панă, Ишлей районĕнче 1.407 çынран 1.373 çын, Советски районра 1.433 çынран 1.304 çын нормăсене панă.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра кросс çителĕксĕр пырать-ха. Уйрăмăнах Калинино, Улатăр, Йĕпреç, Канаш, Етĕрне районĕсенче кросс калама çук начар иртет.

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кроса активлăн хутшăнмалла. ВЛКСМ обкомĕн тата горкомĕсемпе райкомĕсен комсомолецсемпе çамрăксене кроса явăçтарас ĕçе вăйлатмалла.

Пиншер çамрăк кроса хутшанчĕç

КУКЕÇ. Районри колхозсенче, учрежденисемпе предприятисенче кросс пысăк активлăхпа пулса пырать. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне кроса районĕпе 3.197 çын хутшăннă. Вĕсенчен 1.222 çын БГТО, 1.780-шĕ ГТО, 44 çын ГТО II-мĕш ступени нормисене панă.

Кросс малалла та ăнăçлăн пырать.

П. АЛЕКСЕЕВ.

Уйăхри задание ытлашшипех пурнăçларĕ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод май уйăхĕнчи производство программине майăн 28-мĕш тĕлне 101,2 процент пурнăçларĕ. Завод коллективĕ хăшпĕр заказсем тĕлĕшпе уйăхри задание 5 кун малтанах тултарчĕ. Уйрăмăнах ку уйăхра Цфасман, Кинзбургский юлташсем ертсе пыракан цехсем аван ĕçлерĕç. Вĕсен цехĕсем задание 110 процент ытла тултарчĕç. Çавăн пекех Златопольский юлташ начальник пулса ĕçлекен цех та, ĕçри йывăрлăхсене пăхмасăр, производство планне срокченех пурнăçларĕ.

Е. ОГОРОДНИКОВА.

НИМĔÇ САМОЛЕЧĔСЕМ ЛЕНИНГРАД ÇЫВĂХĔНЧИ ХАЛĂХ ПУРĂНАКАН ПУНКТСЕНЕ ТАПĂННИ

Майăн 30-мĕшĕнче нимĕç авиацийĕ Ленинград çывăхĕнчи халăх пурăнакан пунктсене тапăнма хăтланнă. Пирĕн истребительсем тăшман самолечĕсен пысăк пайне çав халăх пурăнакан пунктсем патне çитиччен сапаласа янă. Вĕçсе çитме пултарнă темиçе самолет хăйсен бомбисене ним тĕллисĕр пăрахнă, бомбăсем объектсенчен аякрах ÿкнĕ. Инкеклĕ пысăках мар. Кăштах вилнисемпе аманнисем пур. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 25 самолетне персе ÿкернĕ. Тата унсăр пуçне зенитнăй артиллери тăшманăн 6 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çапла вара нимĕçсен 31 самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

МОНДЕВИЛЕ, ФОДЖАНА, НЕАПОЛЕ ТАТА ПАНТЕЛЛЕРИПЕ САРДИНИ УТРАВĔСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: майăн 30-мĕшĕнче кăнтăрла Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Фоджăри аэродрома (Италия) тапăннă. Чылай самолетсене пĕтерсе тăкнă тата нефтехранилищĕсене вут тивертсе янă. Çавăн пекех бомбăсем тÿрремĕнех ангарсемпе казармăсем çине ÿкнине палăртнă.

Майăн 30-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем Кан çывăхĕнчи Мондевильри хурçă шăратакан завода атакăланă.

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: ĕнер самолетсен пысăк соединенийĕсем Неаполе атакăланă. Майăн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Пантеллери утравĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Ĕнер Сардинипе Пантеллери утравĕсене тапăннă.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ÇЫРАНĔНЧИ ПĔР ПУНКТА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 30-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тăшман самолечĕсем Англин кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕнчи пункчĕсенчен пĕрин çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахни пăртак сиен кÿнĕ, аманнисемпе вилнисем пур.

США-н ВĂРÇĂ ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔН ДИРЕКТОРĔ ТИНЕСРИ ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН ТАТА СЫВЛĂШРАН БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă информаци бюровĕн директорĕ Дэвис радио тăрăх сăмах каланă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, юлашки икĕ уйăх хушшинче тăшманăн подводнăй лодкисемпе кĕрешес ĕç пĕрмаях лайăхланса пынă, çавна нацистсен ирĕксĕрех йышăнса Германи халăхне ăнлантарса пама тивнĕ.

Германи çине бомбăсем пăрахса, — тенĕ Дэвис малалла, — эпир пуринчен малтан Германи промышленноçне çĕмĕрме шутлатпăр. Хальхи вăхăтра сывлăшран тапăнса бомбăсем пăрахнипе кăна вăрçăра çĕнтерме пуррине шанакан çар çыннисем питех те сахал. Анчах та нумай вăхăт хушши хальхи пекех нумай бомбăсем пăрахса тăрсан, вĕсем Германи промышленноçĕн хăватне самаях хавшатма пултараççĕ, çавăн пекех Германи халăхĕн пухăшкăмăлне те пусарса лартма пултараççĕ.

«Испанири фашистсен партийĕ контрольлесе тăракан испанецсен пичечĕпе радиовĕ,—тенĕ малалла Дэвис, — çак эрнере сывлăшран бомбăсем пăрахнине хирĕç протестлесе калаçрĕç. Сывлăшран пĕр енĕ бомбăсем пăрахнине пула тепĕр енĕ те бомбăсем пăрахма тытăнать, хаос пулса каять», теççĕ вĕсем. Çавăн пек калаççĕ Испани фашисчĕсем. Вĕсем нимĕçсене нихăçан та — эпир Варшава, Роттердам, Белград, Лондон хулисем çине бомбăсем ан пăрахăр, мĕншĕн тесен апла хăтланнăшăн сире хăвăра тавăрма пуçлĕç, темен. Анчах та хальхи вăхăтра нимĕçсене хирĕç тавăрма пуçласан, вĕсем союзниксене çавăн пек тума пăрахтарасшăн».

Дэвис хăйĕн сăмахне çапла каласа пĕтернĕ: «Нимĕçсем, итальянецсем, японецсем тата вĕсен тусĕсем сывлăшран тапăнса бомбăсем пăрахнине хирĕç ытларах та ытларах протестлеме пуçлĕç. Союзниксен сывлăшри бомбардировкисене хирĕç пуçласа янă пропаганда компанийĕпе усă курса, тăшман хăй поражени тÿсес куна малалла тăсма хăтланать», тенĕ.

ГРЕЦИ ПАРТИЗАНĔСЕМ ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ПЫСĂК ОТРЯДНЕ СĔМĔРСЕ ТĂКНĂ

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нумай пулмасть Греци партизанĕсем итальянецсен пысăк отрядне çĕмĕрсе тăкнă. Вăл отрядра 1.200 салтак пулнă. Засада туса партизансем итальянецсене сасартăк тапăннă. Юнлă çапăçу пуçланса кайнă. Оккупантсен 400 салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă. Итальянецсен 130 салтакне тыткăна илнĕ. Унсăр пуçне, партизансем çар трофейисем нумай тытса илнĕ, вăл шутра хĕçпăшалсем те нумай.

ЖИРОПА ДЕ ГОЛЛЬ КАЛАÇНИ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине Жиропа де Голль калаçма пуçланă. Калаçусенче Катру генерал пулнă.

ФРАНЦУЗСЕН АЛЕКСАНДРИРИ ЭСКАДРИ СОЮЗНИКСЕМПЕ ПĔРЛЕШНЕ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Лондонра çапла пĕлтернĕ: французсен Александрире тăракан эскадри союзниксемпе пĕрлешнĕ. Ку ĕç Жиро генералпа калаçнă хыççăн пулнă. Çав калаçусем çинчен Англи правительствине пĕлтерме пĕлтерсе тăнă.

СТОКГОЛЬМРА ШВЕДСЕНЕ НИМĔÇСЕН «СС» ВОЙСКИСЕНЕ ЯМА ПУХАКАН ОРГАНИЗАЦИЕ ТУПНĂ

СТОКГОЛЬМ, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем шведсене нимĕç «СС» войскисене яма пухакан вăрттăн организацие тупни çинчен пĕлтереççĕ. Швеци полицийĕ çав организаци пухнă 10 çынна ярличчен икĕ-виçĕ сехет малтан унăн пулĕмĕнче ухтарнă. Швеци хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Германие çавăн пек янисем уйччен те пулнă. Тупнă организацие ертсе пыракан Швеци подданнăйĕ фон Кюн пулнă. Хăй каланă тăрăх, Германире вăл специальнăй шкултан вĕренсе тухнă, Швецире вăл урăх хушаматпа пурăннă.

КĔСКЕН

▲ Копенгаген хулинче вăйлă взрыв пулнипе Германи çарĕ валли пулеметсем тăвакан завод ишĕлсе аннă. Çавăн пекех Данири Свендбергпа Ольборг хулисенчи судоверфьсем те ишĕлсе анса ĕçлеме пăрахнă.

▲ Лабрадорта (Канада) самолетсене Европăна вĕçтерсе яма питĕ пысăк аэродром тунă. Ку аэродромпа халĕ Канадăн, Англин тата США-н çар транспорчĕн авиацийĕ усă курать. Ăна тума ку таранччен 15 миллион доллара яхăн пĕтернĕ.

▲ Канадăра 1 миллиард та 100 миллион долларлăх «Çĕнтерÿ заемĕ» кăларнă. Заем пиťĕ ăнăçлăн сарăлать. Заем илме майăн 16-мĕшĕ тĕлнех ăна кăларнă суммăран нумай ирттерсе çырăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ялхуçалăх банкĕн Чăваш конторине çак профессисене пĕлекен работниксем кирлĕ: хула тулашĕнчи колхозсене укçа-тенкĕ парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, вăл колхозсене пулăшса тăракан инспектор, инспектор-ревизор, бухгалтер. Ялхуçалăх банкĕн уполномоченнăйĕн Çĕмĕрле хулинчи пункчĕ валли инспектор кирлĕ. Хваттер пур.
Условисем çинчен тĕплĕнтереххĕн çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, Государство банкĕн çурчĕ.

Чăвашсен Ялхуçалăх Институчĕн ботаника кафедрине лаборант кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ 34.
Дирекци.

„Росглаввино" Шупашкарти эрех комбинатне районсенче сад çимĕçсем тата çырла пуçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсемпе агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Коммунальнăй слобода, 21-мĕш çурт. Телефон 1—73 (пĕр звонок).

Чăвашпотребсоюза машинистка, секретарь-машинистка, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе, пушномехсырье тата лехтехсырье тĕлĕшпе ĕçлекен товароведсем, пахча-çимĕçе ĕçлесе тăвакан технолог кирлĕ.
Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Столовăй пур.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чăвашпотребсоюз, Театральная, 1/5. Телефон 2—12.
2—1.

Чăваш Мельтрестне аппаратра ĕçлеме снабжени тĕлĕшпе ĕçлекен ответисполнитель кирлĕ.
Заняти вăхăтĕнче çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 15, Мельтрест.

Чебторга бухгалтер тата катка-пичке тăвакансем кирлĕ. Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11.

Республикăри карточка бюроне материальнăй учета пĕлекен икĕ бухгалтер васкавлăн кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Калыков урамĕ, 5.

Чăваш АССР Апат-çимĕç халăх Комиссариатне опытлă машинистка васкавлă кирлĕ. Ĕçукçи калаçса татăлнă тăрăх. Çак адреспа ĕç вăхăтĕнче ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 15, Чăваш АССР Апат-çимĕç халăх Комиссариачĕ.
2—1.

Каучукран тунă çавракă пичет çухалнă. Пичет çине çакăн пек çырнă: „Совнарком Чувашской АССР. Отдел хозяйственного устройства Эвакуированного населения и переселения колхозников". Çав пичете, çухалнă пирки, законлă мар тесе шутламалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НГ 1343 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Ф. б. 53 84 п. л.